# ÇĔРПЕ ПОЭЗИ

Эпĕ хура кĕркунне, хура пӳртре çуралнă, çавăнпа хура пулнă пулас. Хама мĕн кĕçĕнренех астăватăп: ăшă пӳртре, мачча çывăхĕнчи нар çинче выртаттăмăр. Кĕрхи тата хĕллехи каçсенче атте мана час-часах тахçан авал пулнă ĕçсем çинчен каласа паратчĕ. Вăл хутла пĕлместчĕ, çавăн пирки хăйне тĕттĕм те ăраскалсăр çын тесе шутлатчĕ, вырăсла ăнланмастчĕ, анчах чăвашла унран лайăхрах пĕлекенни таврара пулман, хамăр чĕлхен кашни сăмахне вăл чунĕпе туятчĕ. Шел, çакна эпĕ питĕ кая юлса, атте çĕр ытамне кĕрсе выртсан тин, тавçăрса илтĕм.

Тăван килтен эпĕ вун тăватă çултах тухса кайрăм, вĕрентĕм, ĕçлерĕм, аттепе сайрара пĕрре тенĕ пек кăна курнăçкаларăм. Халĕ вара, пуçри хура çӳçĕмрен çурри кăвак тĕспе витĕннĕ хыççăн, хам çыру сĕтелĕ хушшине кашни лармассерен куçа хупатăп та аттем — манăн пĕрремĕш вĕрентекенĕм — каланă сĕтеклĕ те сăнарлă сăмах çаврисене аса илме тăрăшатăп. Пысăкрах ĕçпе ларнă чухне эпĕ ытларах ялта, халăх хушшинче пурăнатăп, анчах чăвашла атте пек çемçен, тасан, кĕвĕллĕн калаçакансене питĕ сайра куратăп. Хăйĕн çывăх тăванĕ Константин Иванов Чĕмпĕртен яла килсен кашнинчех курса калаçма тăрăшнине мăнаçланса каласа паратчĕ атте. Ача чухне ку сăмаха ытлашши хăлхана чиксех кайман эпĕ. Каярахпа, Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен монографи çырнă, уйрăмах ун чĕлхине тĕпченĕ чухне, чăваш чĕлхине питĕ чаплă пĕлекен поэт мĕн тĕллевпе çăпата сырнă та килти пир кĕпи тăхăннă сухаçпа ăшпиллĕн калаçнине ăнкарса илтĕм. Атте, çутçанталăкпа Турă пĕрлĕхне чунтан ĕненекен этем, мана мĕн ачаранах поэтла шухăшлама, тăван чĕлхене юратма вĕрентнĕ. Кайран, Мускавра, чĕлхе саккунĕсене манăн Виктор Владимирович Виноградов академик лекцийĕсенче алла илме тиврĕ. Вăл манăн иккĕмĕш вĕрентекен пулчĕ.

Атте юрă юрламастчĕ, юмахсем калама та юратмастчĕ. Килте чух хĕллехи каçсенче эпир, ăна-кăна чухлакан пулнă ачасем, виç уралла хăйчиккинчи хăйăсене черетпе улăштарса тăраттăмăр. Александр Твардовский хăй поэзийĕн никĕсне ашшĕн тимĕрçĕ лаççинчи вучах хĕмĕпе сунтал сассине хывнă пулсан, маншăн тесен вара Урал тăвĕ хушшинчи çырмара пытанса ларакан хура пӳрт Мускаври Тверь бульварĕнчи Литература институтĕнчи поэтика семинарĕ пекех пулнă.

Ултă ача валли çипуç çĕлеме сӳс, йĕтĕн тата çăм çипсем

нумай кирлĕ пулнă, йăмăксем пĕчĕкчĕ-ха. Арлакан анне вара йĕке хăй юррине юрланă майĕпе пире юмах ярса паратчĕ, хăш чухне пĕр юмахах виçшер каçа тăсăлатчĕ. Сăмахпа çеç каламастчĕ вăл, юмахри çынсен юррисене те юрлатчĕ. Юрласса вара чăвашла кăна мар, тутарла та, пушкăртла та шăрантаратчĕ, ку чĕлхесене вăл япăх мар пĕлетчĕ. Каярахпа, Пушкăрт патшалăх тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ чухне, çав юрăсем пушкăрт халăх эпосĕн пайĕсем пулнине ăнланса илтĕм. Çав эпосăн улшăнса чăвашланнă пайрăмĕсем тĕпчев ĕçĕшĕн калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ пурлăх пулма пултарнă, анчах эпĕ, манмăп-ха тесе, анне юррисене çырса юлман.

Çуркунне, пӳрт тăрри çунаттинчен сарă йĕкесем çакăнма тытăнсан, хура пӳрт тăвăрланма пуçлатчĕ, унта кичем те нӳрĕччĕ. Ачасем — хăшĕ кăмака çинчен, хăшĕ нар çинчен йăраланса ансан кашнине валли ларма вырăн та çитейместчĕ. Пĕтĕркке сурăх путеккисем те, çинçе ураллă пăру та çавăнтахчĕ. Урамра та, сăртламсенче те симĕс курăк тапранать пулин те, халăх хавасĕ курăнмастчĕ. Çатан карта юписем çинче лаша пуçĕсен сарăхса кайнă шăммисем çакăнса тăратчĕç, вĕсене пăхсан выльăхчĕрлĕхе вилĕмрен, халăха инкек-синкекрен сыхлакан хӳтлĕх пур пек туйăнатчĕ. Урамра, туйисемпе умри çул хыттине такка-такка, трахом чирĕпе суккăрланнă карчăксемпе стариксем мĕлке пек уткаласа иртетчĕç. Анчах тăван чăваш ялĕнчи сăнсем темĕнле хăрушă, кичем пулсан та хама эпĕ вăхăтлă та ăнăçлă çуралнă тесе шутлатăп, ачалăх кунĕсене вара ылтăн хакнех хуратăп.

Уй-хир типме тытăнсан ĕмĕр çамрăк çутçанталăк уявĕ пуçланатчĕ. Ун чух вара аттепе Пракух пичче сухана тухатчĕç, куршанак çыпçăнмалла тесе мана та хăйсемпе пĕрле илетчĕç. Тĕттĕмленеспе, кăвайт умĕнче ларнă чух, эпĕ чи çутă çăлтăр çине пăхса хам пĕлнĕ пек кĕлĕ тăваттăм, пĕрре вĕреннĕ сăмах çаврине çичĕ хут калаттăм, хам ятпа телей ярса пама, мана хут вĕренме пулăшма, ял канашĕн çыруçин пуканĕ çине лармалăх тивлет кӳме йăлăнаттăм. Кăнтăрласенче вара С.Т. Аксаков çĕр çул каялла çӳресе «Записки об уженье рыбы» текен тата ытти хайлавсенче сăнласа кăтартнă вырăнсене йĕрлеттĕм.

Пирĕн несĕлсем пушкăрт çĕрĕн ытармалла мар илемлĕ те пуян кĕтесĕнче, унăн вăрманлă та çеçен хирлĕ пайĕнче пурăннă. Вĕсем кунта Атăл хĕрринчен, тĕрлĕрен куланайпа хĕн-хура хирĕç пăлхав çĕкленĕшĕн хĕсĕрленинчен тата христиан тĕнне вăйпах йышăнтарассинчен хăранипе тарса килнĕ. Чăваш тĕнĕпе пурăнаканăн тиексене çăл шывĕшĕн те, начар вырăнти саплăк пек çĕр анишĕн те куланай тӳлеме тивнĕ. Пушкăрт çĕрĕ çине Пихампарпа Киремете пăхăнса пурăнакан пăлхавçă чăвашсем хыççăн вĕсен ентешĕ-хурăнташĕ ялĕ-ялĕпе тенĕ пек куçма тытăннă, ма тесен чăвашра, архив хучĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, йывăç хуппинчен е тĕрлĕ курăксенчен вĕретнĕ апат Турă пӳрнĕ çимĕç вырăнне пулнă.

Дёмăпа Ик юханшывĕсем хушшинче чылаях вăйлă халăх шутланма тытăннă чăвашсем хăйсен мехелĕпе Пелепей хулине никĕсленĕ. Анчах авалхи çĕршывĕнчи тип шар вĕсене кунта та канлĕх паман. Кĕçех вĕсем пурăнакан çĕре те сутуçăсем, тĕрлĕ тӳре-шара, вĕсем хыççăн чиркӳ çыннисем çитнĕ. Православи тĕнĕпе патшалăх ячĕпе вĕсем йывăç чиркӳ лартаççĕ, чăвашсем вара ăна çунтарса яраççĕ. Кĕл купи вырăнĕнче чул чиркӳ ӳссе ларать. Чăвашсем хăйсен туррисене пуççапакан сăваплă ращасене патша салтакĕсем касса вутă тăваççĕ, кăтăрса кайнă халăх чиркӳ çуртне нимĕнле сăтăр та кӳреймен енне шалти иконăсене çырмана кăларса перет. Вара чăвашсене Елизавета Петровна патша хушнипе хуларан кăларса яраççĕ.

Пелепей пăлхавçисенчен пĕри сĕм вăрмана кĕрсе кайса Слак шывĕ хĕррине вырнаçать. Çынсем ăна Кашкăр тесе çĕнĕлле ят параççĕ, мĕншĕн тесен вăл кашкăр сунарне çӳрекен çын пулнă. Тепĕр тесен, «Кашкăр» ят унăн пайăр ячĕ те пулма пултарнă. Ĕлĕкхи чăвашсем хăйсене йывăç, тĕрлĕрен чĕрчун, кайăк ячĕсемпе чĕннĕ. Ку йĕрке чăвашсем христиан тĕнне йышăнсан та çухалман. Калăпăр, христиан йĕркипе çынна Çемен ятлă хунă пулсан, унăн çав вăхăтрах, сăмахран, Курак текен чăвашла ячĕ те пулма пултарнă. Халăхра ăна çав ятпа чĕннĕ. Чăвашсем çапла шутланă: çынна йывăр айăпшăн е çылăхшăн Турă яракан чир Çемен ятлă çынна шырать, Çеменĕ вара халăхра Курак ятпа çӳрет. Çавăнпа инкек ăна тупаймасть. Тăхăмĕсен сывлăхне, пурнăçне тасан сыхласа хăварас тесе чăвашсем вырăс Туррипе хăйсен Туррисем хушшинче çакнашкал чее вăйă вылянă.

Кашкăр, Пелепей пăлхавçи, чăваш халапĕ-юмахĕ пĕлтернĕ тăрăх, несĕлне тăсас тĕлĕшрен ăнăçлă çын пулнă. Вăл кашкăр сукмакĕсем çине капкăн лартнă вырăнта пурăна киле пысăк чăваш ялĕ ӳссе ларнă, вырăс, тутар, пушкăрт халăхĕсем хушшинче хăйĕн авалхи йăли-йĕркине, чĕлхине упраса хăварма пултарнă. Тĕрлĕ йăхлă ялсем пĕр-пĕрин хушшинче килĕштерсе пурăннă. Апла пулин те тепĕр чухне хĕтĕртекенсем тимлениpе хирĕçӳсем тухни пулнă, ун пек чухне вара туртасем те хута кайнă.

Пирĕн Слакпуç ялĕ унта чăваш литературине тата чăваш литература чĕлхине никĕслекенĕ Константин Иванов поэт çуралса ӳснипе паллă. Слакпуç диалекчĕ, хирĕçӳллĕ те нумай енлĕ кĕрешӳре çирĕпленсе, пуянланса пынăскер, чăваш литература чĕлхине йĕркелес ĕçре хăйне евĕр вырăн йышăнать.

Тĕне кĕнĕ Йăван ятлă чăвашпа унăн тĕне кĕмен Пăртта ятлă арăмĕ пуçласа янă йăхран çĕрме пуянсем те, чĕлхе ăстисем те, ăслă çыруçăсем те тухнă. Асаттене илсен, вăл та лайăх, ытлăçитлĕ пурăннă, анчах Урал тăрăхĕнче час-часах аçа çапса шар кăтартасси пур та, асатте те виçĕ пушар хыççăн çука юлнă.

Çĕр мана ача чухнех пысăк савăнăç кӳретчĕ. Вăхăта эп ытларах Силпи тата Чипикаран шывĕсем хушшинче пралукран килте

туптаса тунă вăлтапа пулă тытса ирттереттĕм. Хĕвеллĕ те шăрăх кунсенче те сивĕччĕ унти шыв, тăрна куçĕ пек тăрăччĕ, вăлтапа йăрă ырашпăтрисем, кĕркке кĕретчĕç, вăрман кăвакарчăнĕсем кăвăлтататчĕç. Ытти хресченсем пекех, пирĕн атте те ака ĕçĕсене çурхи уяв умĕнхи кĕçнерникун тĕлне вĕçлеме тăрăшатчĕ. Ӳт çинче тарпа хура йăваланма тытăнисченех кирĕкленнĕскерсем, эпир кĕçнерни каç яла таврăнаттăмăр, эрнекун Çимĕк уявне кĕтсе илеттĕмĕр, уявĕ вара шăпах пĕр эрне, тепĕр эрнекунччен, пыратчĕ. Юнкун чăвашсем выльăх пусса юн кăларатчĕç: пуянсем — вăкăр, çук çынсем — чăх. Эрнекун чăвашсемшĕн, тĕне кĕрсен те, пурпĕрех сăваплă кун шутланнă. Çав кун нимĕнле ĕç тума та юраман, урам урлă выртан пĕренене те тăрăх çавăрса хума юраман. Уяв эрнинче çынсем туйсем тунă, хăнавĕрле пухнă, яш-кĕрĕм вăййа тухса савăннă. Уяв пĕтсен пурте шăпланнă. Шăпах çак самантра поэзи пĕлтерĕшлĕ пулăм пулса иртетчĕ: çимĕк иртсен куккук — вăл та халăх кăмăлне ăнланнă тейĕн — авăтма пăрахатчĕ. Ку ĕнтĕ çынсем çураки ĕçĕсене вĕçленине, кайăксен чĕпĕсем тухнине пĕлтернĕ. Çимĕк хыççăн ватăсем çамрăксене юрлама-ташлама чарнă, çĕр çине туя ӳкерме те юраман: çĕр пĕтĕ пулнă, кайăксем те хăйсен чĕпписене пăхнă.

Ачалăхăм тĕнче икке пайланнă тапхăрта килчĕ манăн. Çывăхри ялсенчи хресченсем 1917 çулхи кĕркунне Пестров улпут çуртйĕрне туртса илнĕ, патша правительствинче министрта ларакан Дурново графăн пуян çĕрĕсене конфискациленĕ. Куроедов пуянăн спирт заводне аркатса тăкнă чухне эпĕ улттăраччĕ. Хĕрĕхшер витре кĕрекен юман пичкесемпе спирт турттаратчĕç вĕсем, çулсем çинче вил ӳсĕр çынсем выртатчĕç. Эрех пăраки ĕçсе ĕнесем, вăкăрсем, лашасем урса кайрĕç. Ӳсĕр автансем, авăтма хăтланкаласа, çатан карта çинчен çĕре тӳнетчĕç.

Ирĕклĕхшĕн çапăçса пуçĕсене хунă паттăрсен шăпи мана та хытă хурлантарнă. Пĕррехинче, тăвайккинчен çунашкапа ярăнса киле таврăннă чух, каçхи шăплăхра пăшал пенĕ сасăсем илтĕнсе кайрĕç. Эпĕ хăранипе юр ăшне кĕрсе выртрăм. Глуховская станцийĕ енчен куç умĕнчех Оренбург казакĕсем çил-тăвăл пек килсе çитрĕç те хĕçĕсене сывлăшра вылятса çамрăк хĕрлĕармеецсене касма тытăнчĕç. Граждан вăрçи вăхăтĕнче, 1918—1919 çулсенче, шуррисемпе хĕрлисем хушшинче хаяр çапăçусем пулса иртетчĕç. Ял çийĕн шрапнель шăхăрни илтĕнсе тăратчĕ. Эпир пĕтĕм çемйипе нӳхрепе анса ларнă самантсем те пулнă. Тифпа чирленĕ атте суйланса выртатчĕ, снаряд ванчăкĕ пӳрт кĕтессине аркатса тăкнăччĕ.

1919 çулхи çу уйăхĕ çитрĕ. Пирĕн ял витĕр Хĕрлĕ Çарăн Пиллĕкмĕш Армийĕ Ёпхĕвелле иртсе кайрĕ.

Тăван çĕр, мĕн авалтан халăх юнĕпе те вĕри тарпа шăварăннăскер, маншăн мĕн ачаранпах хаклă. Çав юрату манăн сăвăсемпе поэмăсен тĕп теми пулса тăчĕ. Ача чухне эпĕ пуççапса çăлтăрсенчен телей ыйтаттăм, халĕ вара, çав телей тупăнсан, хам тăван

çĕр умĕнче парăма кĕтĕм. Эппин, ман ун çинчен калаçмалла та, çырмалла та.

Пирĕн пилĕк çĕр киллĕ ялта революцичченех икĕ класлă шкул пулнă. Пуян пурăнакан хресченсен ачисем çак шкулта вĕреннĕ, унтан пĕлӳ ӳстерме хăшĕ Чĕмпĕре, хăшĕ Пелепее кайнă. Анчах ялта ытларахăшĕ хут пĕлмен çынсемччĕ. Вĕрӳ-суру карчăкĕ имлени медицина пулăшăвĕ шутланнă, ял тавра хура çăхан çаврăннине инкек палли тесе йышăннă. Пӳрте чĕкеç вĕçсе кĕрес пулсан, тытса унăн пуçне çу сĕретчĕç, вара телей килессе кĕтме тытăнатчĕç. Вĕсен йăлипе, турăсемпе эсрелсем таçта та пурăннă — сакайĕнче те, çăлкуç шывĕнче те, мунчара та, уй варринче пĕччен ларакан хурама тымарĕ айĕнче те.

Урал тăрăхĕ граждан вăрçи-харçинчен тасалса пĕтсенех ялта çĕнĕ пурнăç вĕреме тытăнчĕ. Купца кĕлечĕ пулнă пысăк чул çурт кĕçех халăх çурчĕн ятне илчĕ, унта чăваш драматургĕсен тата Ĕпхӳри чăваш педтехникумĕнче вĕренекенсем куçарнă вырăс авторĕсен пьесисене лартатчĕç. Спектакль тени ун чухне халăхра сарăлайманччĕ-ха. Хупă сасăсем нумаййипе чăвашшăн калама йывăр сăмах шутланатчĕ вăл. Çав спектакльсене шуйттан ваййи тесе ят панăччĕ. Авалхи тĕне сăваплăн ĕненсе пурăнакан ватă çынсем вĕсене питĕ хытă сивлетчĕç. Çав хушăрах сцена çине тухас шухăшлисем çулланнă çынсем хушшинче те пурччĕ. Çамрăкраххисем вара хăйсен сцена пархатарĕ пуррине сĕтел çапсах ĕнентерме хăтланатчĕç. Хĕрсемпе арăмсем ку ĕçе явăçма хăю çитерейместчĕç-ха, çавăнпа вĕсен ролĕсене арçынсемех вылятчĕç. Курма кĕрекен халăх укçан мар, çăмартан тӳлетчĕ. Драма кружокне ертсе пыраканĕсем вара çăмартине сутса краççын туянатчĕç.

Артистсем сцена çинчи вăййа пурнăçпа çывăхлатма тăрăшатчĕç. Енчен те спектакльте ĕçкĕ сценисем пулсан чăн-чăн аншарлиех ĕçетчĕç, пĕр-пĕринпе суфлер каланине итлемесĕр ятлаçатчĕç.

Пуçламăш шкулта вĕреннĕ çулсем уйрăмах асра юлчĕç. Чăнчăн чернила мĕнрен тунине эпир пĕлмен. Эпир ăна чирлĕ юман çулçисем çинче ӳсекен çăпан сĕткенĕнчен тăваттăмăр. Кăранташне вара вĕрене хунавĕнчен ăсталаттăмăр. Варринчи хăвăлне кăларса унта ирĕлтернĕ тăхлан яраттăмăр. Ахаль те сарă хут çине тăхлан кăранташпа çырма питĕ те кансĕрччĕ, алă ывăнатчĕ, пӳрнесем хăпарса тухни те пулнă. Çапах та эпĕ, театр ĕçĕпе интересленсе кайнăскер, пьеса çырас тесе шутларăм.

Пĕрремĕш пулăмне халĕ те астăватăп. Çил-тăманлă каç. Хăйчикки çунакан пӳртре кил-йыш каçхи апат тăвать. Çав вăхăтра урамра пĕр ватă çын патакпа шаккаса халăха пухăва чĕнет. Çакна эпĕ хамăн пиччене вуласа патăм — ăна килĕшрĕ. Вара вăл чугун çул çинче юр тасатса илнĕ укçапа мана хут-кăранташ туянса пачĕ.

Манăн таса, хитре тетраде ниепле те пуçлас килмерĕ, ăна

эпĕ хамăн чаплă хайлав валли упрас тесе шутларăм. Пичче аппана та ботинкăпа калуш илсе парнелерĕ. Аппа тенкел çине шурă тутăр сарчĕ те ун тăрăх çĕн ботинка çийĕн çĕн калуш тăхăнса утса пăхрĕ. Урамри пылчăка вара çăпатапах çăратчĕ. Çакна эпĕ пĕрре çеç мар асăрханă: çурхи уяв кунĕсенче хĕрсем çапçутă калушсемпе çӳретчĕç, çумăр çуса ярсан вара калушĕсене хывса тутăрпа чĕркетчĕç, хăйсем çарран утатчĕç.

Пишпӳлекри хресчен ачисен шкулĕ, пирĕн ялтан хĕрĕх çухрăмра вырнаçнăскер, интернатчĕ. Унта эпĕ 1925 çулта кĕтĕм. Шкулăн çĕр лаптăкĕ те пурччĕ. Чăваш ачисем унта Пушкăртстанпа Самар тăрăхĕнчен хăшĕ лашапа, хăшĕ çуран пухăннăччĕ. Унта çавăн пекех вырăс, украин, пушкăрт, тутар, мăкшă ачисене йышăнатчĕç. Вырăнти ялсенче хваттер тупайманнипе ачасем пĕр пысăк пӳлĕмре пурăнатчĕç. Анне мана кунта çуран илсе килчĕ. Минтер тата михĕ парса хăварчĕ. Çывăрма эпĕ çав миххе кĕрсе выртаттăм. Простынĕ те, утиялĕ те хăехчĕ вăл. Пӳлĕмре пĕр вăтăр ача ытлаччĕ. Шавлаттăмăр, тытăçаттăмăр, йĕреттĕмĕр, çураçсан вара пĕр-пĕрне хĕвелçаврăнăшĕпе е мăйăрпа хăналаттăмăр. Çак хăйне евĕр хресчен лицейĕнче пилĕк чĕлхепе калаçаттăмăр. Хирĕçӳ-тавлашура эпир нихçан та наци туйăмĕсене тĕкĕнмен. Малтанхи çулнех, пионер отрячĕн пуçлăхне суйласан, эпĕ питĕ хĕпĕртерĕм. Епле хĕпĕртемĕн: авалтан килекен несĕл кун-çулĕнче асли пулма эпĕ чи пĕрремĕш суйлантăм-çке-ха.

Октябрь уявĕ тĕлне эпĕ стена хаçатĕнче 1919 çулхи хĕлле хамăр ялта хĕрлисемпе шуррисем хушшинчи çапăçу çинчен пĕчĕк очерк çырса кăлартăм. Преподавательсенчен пĕри, хамăр ял çынни Данил Васильевич, мана çапла сĕнчĕ:

— Сăвăлла çырса пăхмăн-и?

— Пултараяс çук пуль.

— Кĕçтенттин пиччӳ çырнисене вула та...

«Нарспи» поэмăна лайăхах пĕлнĕ-ха эпĕ, ун тăрăх лартнă инсценировкăна ялти сцена çинче сахал мар курнă. Нарспи рольне калама çук чипер, хуп-хура çӳçлĕ Агриппина Архиповна, поэтăн тăван пиччĕшĕн Квинтилианăн мăшăрĕ, вылятчĕ. Ĕçлессе вăл ял Канашĕн секретарĕнче ĕçлетчĕ. Шăпах вăл сĕннипе тата çав сĕнӳ хучĕ çинче алă пусса, çавра пичет çапса панипе кĕтĕм те ĕнтĕ эпĕ хресчен çамрăкĕсен шкулне.

Константин Иванов Силпи шывне питĕ чаплă сăнласа кăтартнă. Шăпах çав шыв хĕрринчи уйсене сухаланă ĕнтĕ эпĕ, çутçанталăк илемĕнчен тĕлĕннĕ. Ăшăмра шухăшлаттăм: Буденный ячĕллĕ пионер отрядне ертсе пыраканшăн кунти тăри юррипе киленни сахал, унăн çав илем çинчен революцилле хӳхĕм сăвă шăрантармалла. Çĕрлесенче, хамăн ăшă михĕре выртнă май, юлташсем çывăрса кайсан, эпĕ йĕрке хыççăн йĕрке шăрçалаттăм.

Çапла çуралчĕ те манăн «Тĕрмере» ятлă пĕрремĕш сăввăм. Вăл стена хаçатĕнче 1926 çулхине МОПР кунĕ тĕлне тухрĕ. Унта

çамрăк революционер решетке витĕр сенкер тӳпене тинкерни çинчен çырнăччĕ.

Шкула вун тăватă çулта кĕнĕскер, эпĕ вырăсла аран-аран кăна калаçкалаттăмччĕ. Библиотекăри чăвашла кĕнекесене темиçешер хут вуласа тухнăскер, вырăсла çырнă хулăн кĕнекесене ăнланса вулакан тантăшăмсене ăмсанаттăмччĕ. И.Я.Яковлевăн чăваш шкулне вырăссене те илес йĕрки хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче те усă кӳретчĕ. Вырăс мар халăхсен ачисем, пĕр-пĕрин хушшинче вырăсла перкелешсе, унччен пĕлмен чĕлхене чиперех хăнăхса пыраттăмăр. Вырăс ачисем хăйсем те чăвашла чипчиперех хăнăхса пыратчĕç. Вĕсенчен чылайăшĕ кайран Ĕпхӳри чăваш педтехникумĕнче вĕренсе чăваш шкулĕсене вырнаçрĕç.

Шкулта эпĕ хамран пĕр çул маларах пыракан Иван Гурьевпа, Трофим Гурьевич ятлă учитель ачипе, туслăччĕ. Вăл вырăсла питĕ лайăх пĕлетчĕ, мана та яланах пулăшатчĕ. Ваня ӳкерме питĕ ăстаччĕ, анчах кайран вăл ĕçе пăрахрĕ, хаçат редакцине кĕрĕшрĕ, чылай çул хушши «Советская Башкирия» хаçат сотрудникĕнче тăчĕ.

Çапла, аттепе анне шанăçне тӳрре кăлараяс марринчен шикленсе, хăюсăррăн пырса кĕтĕм эп икĕ хутлă шкул çуртне. Вырăсла вĕреннĕçемĕн вырăс тĕнчине кĕтĕм, Пушкинпа, Лермонтовпа канашларăм, Алексей Кольцов, Иван Никитин поэтсемпе пĕрле вырăсла юрăсем юрларăм. Кăштахран пирĕн шкулăн библиотекине Некрасов кĕнекине илсе пычĕç. Малтанах Некрасов хăй те илĕртмерĕ, сăввисем те янăравлă пекех туйăнмарĕç, анчах пурăна киле вăл манăн юратнă поэт пулса тăчĕ. Вăл инкекпе хĕн-хур юрăçи мар, вăл халăх вăйне ĕненекен, шанакан поэт. Некрасов вырăс поэзийĕн чиккисене саракан çĕнетӳçĕ те: сăввисене вăл анăç поэтикине пуç тайса мар, вырăс халăх сăмахлăхне тĕпе хурса çырнă. Çак шухăша Корней Чуковский хăйĕн «Некрасов ăсталăхĕ» кĕнекинче тĕплĕн çирĕплетет. Унăн «Кому на Руси жить хорошо» поэми идея енчен çеç мар, ăсталăх тĕлĕшĕнчен те тĕнче литературинчи «Гамлет», «Фауст», «Тадеуш пан» пек шедеврсемпе танлашать.

Вăхăт иртсех пырать. Çĕнĕ çул тĕлне пире пурне те çĕнĕ çи-пуç тăхăнтарчĕç. Эпир сукна шинельпе, сукна шăлаварпа, юр çинче хитре йĕр хăваракан калушпа çӳренине пĕтĕм халăх ăмсанса пăхатчĕ. Шкулта литература кружокĕ ĕçлетчĕ. Унта шкул ачисем пурте тенĕ пекех çӳретчĕç. Халăх кĕвви майлă сăвăсем çырма хăнăхасси кашниншĕнех чун туртăмĕ пулса тăчĕ тейĕн. Хăш чухне ачасем изложенисене те сăвăлла çырса Семен Николаевич ятлă учителе тĕлĕнтеретчĕç. Сăвăлла изложенисене вăл час-часах «неуд.» е «уд.» лартса паратчĕ. Изложенисене ачасем кам хăш чĕлхене лайăхрах пĕлет, çав чĕлхепе çыратчĕç.

«Çулăм» ятлă алçыру журналĕнче трактор, çĕрĕç юлташлăхĕ çинчен çырнă сăвăсем туха пуçларĕç. Сăмакуна, трахом чирне сивлекен сăвăсем те сахал марччĕ. Журнал редколлегийĕ автор-

сене юрату ҫинчен ҫырмалла мар тесе хыттăн асăрхаттарса хунăччĕ. Арҫын ачасемпе хĕр ачасене пĕр-пĕрин хушшинче ҫыру ҫӳретнине сиссен тӳрех вĕренекенсен комитечĕн ларăвĕнче сӳтсе яватчĕҫ. Айăпа кĕнисене куҫҫуль тухичченех питлетчĕҫ, намăслантаратчĕҫ, хресчен ҫамрăкĕсен шкулĕнче икĕ тĕллев — лайăх вĕренесси тата шкул пахчинче тăрăшса ĕҫлесси пулни ҫинчен асăрхаттаратчĕҫ. 1928 ҫулччен, шкултан вĕренсе тухиччен ĕнтĕ, эпĕ ҫак мораль виҫинчен пач тухмасăр пурăнтăм. Юрату темине пĕрре те хускатман. «Ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсем» ятлă вăрăм поэма ҫыртăм. Унта пĕр революционер тĕрме чӳречин решеткине тимĕр йĕкевпе хăйраса татса ирĕке тухнине сăнласа пама хăтлантăм.

Шкулта драма кружокĕ те пурччĕ. Пĕр-пĕрне юратакансен ролĕсене вĕрентекенсем е вулăс кантурĕнче ĕҫлекенсем вылятчĕҫ. Шăпчăк пахчи ҫинчен тахҫанах манса кайнă мăкăрти карчăккĕрчĕк ролĕсене вара шкул ачисем сăнарлатчĕҫ, пичĕсене ватăлтарас тесе сăрăсемпе усă куратчĕҫ. Юлашки ҫул вĕреннĕ чухне манăн ăнсăртран тенĕ пек А.Н.Островскин «Бедность не порок» пьесине лартнă чух Митя рольне вылямa тиврĕ. Репетици irттерекен преподаватель вĕрентнисене пĕтĕмпех шута илсе пытăм, сахал мар тар юхтартăм, юрату сăмахĕсем каларăм, анчах та Любушка рольне вылякан Катя Тимофеевăна, хамăр класс хĕрачине, ыталас сцена тĕлне ҫитсен хăравҫă салтак пекех репетицирен тартăм. Анчах ҫакăн хыҫҫăн та театр ҫинчен шухăшлама пăрахмарăм.

Сăлтавĕ те пулчĕ. Артемий Дмитриев, кĕтӳҫ пулнăскер, шкулта ҫулĕпе пуринчен те аслăччĕ. Ҫăпатапа, кивĕ сăхманпа ҫӳретчĕ вăл. Хысна ҫипуҫне ҫакскер килне ăсатнă, шукăлленсе ҫӳреме хăнăхман-тăр ĕнтĕ. Шкул директорĕ ыйтнипе эпĕ ун ҫинчен шӳтлĕ пьеса ҫыртăм. Ăна вара драмкружок ачисем вулăсри конференци вăхăтĕнче выляса пачĕҫ.

1928 ҫулта эпĕ Ĕпхӳри вĕрентӳ институчĕн хатĕрленӳ уйрăмне вĕренме кĕтĕм. Кунта вара предметсене пурне те, физика таранччченех, пушкăртла е тутарла вĕрентетчĕҫ. Ку чĕлхесене самаях ăнкараттăмччĕ пулин те ҫăмăл марччĕ мана. Ҫавăнпа тепĕр ҫулне урăх институтăн хатĕрлев уйрăмне кайрăм. Унта партипе совет ĕҫлевҫисемпе ҫар ҫыннисем вĕренетчĕҫ. Вун ҫиччĕри ҫамрăк, эпĕ студентсен столовăйĕнчи вăрăм черетре вăхăт иртнишĕн кулянаттăм, кĕнеке вулас сехетсем усăсăр ҫухалнишĕн пăшăрханаттăм. Таҫта Александр Блок пилĕк ҫултах сăвă ҫырнă тенине вуласан пушшех ӳкĕне пуҫларăм. Алгебрăн йывăр задачисене мăйăр пекех шĕкĕлчекенскер, сăвă тухайманнишĕн тарăхса икĕ алăри вунă чĕрнене те кăшламаллипех кăшлаттăм.

Хресчен ҫамрăкĕсен шкулĕнче мĕнпур кĕнекене темиҫешер хут вуласа тухни, ҫĕнĕ кĕнеке черетĕнче вун-вунпилĕк ҫын пулни пăшăрхантаратчĕ. Л.Толстой, В.Белинский тата ытти паллă писательсемпе поэтсен кĕнекисем те ҫукчĕ кунта. Библиотекăна темле майпа Байрон кĕнеки пырсан эпĕ, хăю ҫитерсе, Иван

Александрович Матвеев директор патне кайса çав кĕнекене мана парнелеме ыйтрăм. Парнешĕн тав тăвас тесе виçĕ кун хушши шкул кухни валли юман вутти çуртăм.

Ĕпхӳре маншăн чăн-чăн кĕнеке тĕнчи уçăлчĕ. Институт библиотекин çӳллĕ сентрисем хушшинче тĕлĕкри пек тăраттăм эпĕ, Аксаков библиотекин вулав залĕнче тем вăхăтчен лараттăм, ӳнер енĕпе ăнкару сахаллине туйса Козлов художник мастерскойне çӳреме пуçларăм. Вăл мана ялан кăмрăкпа гипс фигурăсем тата панулми ӳкерме хушатчĕ. Çĕрле вара, общежитире пурте çывăрса кайсан, сăвă çырма лараттăм, тăван уй-хире мĕнле тунсăхланине шурă хут çине кăлараттăм. «Юратрăм эп, хирсем, сире» сăвă, 1928 çулта çырнăскер, тепĕр çулне «Сунтал» журналăн çу уйăхĕнчи кăларăмĕнче кун çути курчĕ. Ку вара маншăн чăн-чăн уяв пулчĕ. Çавнашкал çĕкленӳ каярахпа сăвăлла романсемпе трагедисем пичетленсе тухсан та пулман.

Сергей Есенин çырнисен тăвата томлă пуххи пичетленсе тухни наци литературисенче пысăк шăв-шав çĕклерĕ. Есенин портречĕсене кура çамрăк пушкăрт поэчĕсем те, институтăн литература факультетĕнчи студентсем те лĕпĕш текен галстуксемпе çӳреме пуçларĕç. Эпĕ те, сăвăшăн 3 тенкĕ те 15 пус гонорар илнĕскер, çав укçапа çĕнĕ кĕпе, çĕнĕ галстук тата кĕсье сехечĕ туянса çуллахи каникула яла кайрăм. Анчах атте умне капла курăнма лайăх мар тесе чăпар галстука салтса кĕсьене чикрĕм. Станцирен ялалла утнă чухне Есенинăн Рязань тавраш çинчен çырнă шĕкĕр йĕркисем аса килчĕç. Уйĕ-хирĕ пирĕн те Рязань тăрăхĕнчи майлахчĕ-тĕр, анчах шăплăха ту çинчен юхса анакан шывсемпе сенкер тӳпере сас паракан пĕрхĕтсем хăйне май илем кӳретчĕç.

Ĕпхӳре эпĕ икĕ çул вĕрентĕм, пушкăрт писателĕсенчен нумайăшĕнпе паллашрăм, вĕсен кĕнекисене те чылай вуларăм. Батыр Валидовăн ылтăн тăвĕсем çинчен çырнă сăввисенчен тĕлĕнеттĕм, студентсен каçĕсенче Рашит Нигматин пыр тĕпĕнчен тухакан сассине юрататтăм. Сагид Агишпе Баязит Бикбай манăн çывăх туссемччĕ. Шуратăл хĕрринчи ешĕл çерем çинче, Ĕпхĕвĕн сенкер тӳпи айĕнче вĕсем Дертемандпа Бабичăн чаплă сăввисене калатчĕç, пур-çук сассисемпе Салават Юлаев юррисене юрлатчĕç.

Мажит Гафурин йывăç пӳртĕнче час-часах пулаттăм эпĕ. Халь ĕнтĕ çав урам ун ячĕпе хисепленет. Ман умра питĕ те сăпайлă, хура тюбетейкăллă, уксахлакан кăйттăрах этемччĕ, ун пирки аслă тесе ниепле те шухăшлама çукчĕ. Ăна эпĕ халăхри пек Мажит агай тесе чĕнеттĕм, Дĕма шывĕ çинчен каласа панисене хăлха тăратса итлеттĕм, хам пушкăртсем патне кăмăс ĕçме çӳренисене асилеттĕм. Пирĕн умра мăн хырăмлă пăхăр сăмавар ларатчĕ. Хăй вăхăтĕнче, тен, унтан Габдулла Тукайпа Шейхзада Бабич чей ĕçсе киленнĕ-тĕр, халĕ вара хăйĕн ĕнерĕвĕпе пирĕн калаçăва йĕрлесе ларатчĕ. Вăл, ытти Тула сăмаварĕсенчен нимпех те

уйрăлса тăманскер, тутарпа пушкăрт сăвăçисенчен нумайăшне тутлă чейпе хăналанă, каярахпа вара, символла сăнар пулса, Хасан Туфан сăввине ĕмĕрлĕх кĕрсе юлчĕ. Эпĕ те Муса Джалиле халалланă сăввăмра герой-поэт çав сăмавар чейĕпе патварланнине палăртсаттăм.

1930 çулта атте Глуховская станцийĕнче вунтăвата пăт хуратул сутрĕ. Çав укçапа эпĕ Мускава тухса кайрăм. Кĕсьере эпĕ çĕрĕç юлташлăхĕн членĕ пулнине çирĕплетекен пичетлĕ хутсемччĕ: пĕри эпĕ çĕрĕç юлташлăхĕн членĕнче тăнине çирĕплетет, тепри вара Пушкăрт республикин Çутĕç халăх комиссариачĕ ячĕпе мана М.В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав университетне илме сĕнет.

Брюсов курсне тĕпе хурса йĕркеленĕ литература факультетне çамрăк поэтсене, прозаиксене, критиксене, литература тĕпчевçисене йышăнатчĕç. Çав студентсенчен нумайăшĕ вырăс тата Совет Союзĕнчи нацисен литературинче палăрчĕç. Профессорсемпе академиксен лекцийĕсене пуçласа итленĕ май эпĕ хама юмах тĕнчинчи пек туяттăм, мĕншĕн тесен Ломоносов палăкĕ умĕнче эпĕ, хут пĕлмен чăваш хресченĕн ачи, ялта хушаматсăр, Кавĕрле ятпа кăна çӳренĕ сухаçă ывăлĕ, тăнине ĕненесех те килместчĕ.

Студентсен Варваркăри общежитийĕнче çамрăк сăвăçсем те пурччĕ. Вĕсем вара Политехника музейне хирĕçле вырнаçнă Китайгород хӳми текен вырăнти букинист пасарĕнче мĕн пурри-çуккине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлсе тăратчĕç. Хăйсем ура тапса, аллисемпе хăлаçланса Владимир Нарбут, Осип Мандельштам тата ытти поэтсен сăввисене калатчĕç, вĕсене каçса кайса мухтатчĕç, маншăн тесен вара вăл йĕркесем пачах вырăнсăр пек туйăнатчĕç. Сăмахран, пĕр студент мана Николай Гумилевăн «Улттăмĕш туйăм» сăввине вуласа пачĕ те, эпĕ çавнашкал килпетсĕр япалана шурă хут çине пичетленишĕн питĕ пăшăрхантăм. Çапах та эпĕ хирĕçлесе нимех те шарламастăмччĕ, анчах вĕсем пырсан Лермонтовпа Некрасов томĕсене сĕтел çинчен илсе чăматана хураттăм. Факультетри юлташăмсенчен нумайăшĕ мĕнле те пулин «изм» ялавĕ айне тăратчĕ. Сăмахран, хăшĕ Лефа, хăшĕ конструктивизма кăмăллатчĕ. Шавлă пӳлĕмри тавлашусем хăш чухне тытăçусем таранах хĕрсе каятчĕç, çавна кура ман хамăн та пĕр-пĕр кăсăклă литература юхăмне кĕрес килетчĕ. Çав вăхăтра ман алла Семен Кирсановăн «Слово предоставляется Семену Кирсанову» ятлă кĕнеки лекнĕччĕ. Унти кăткăс рифмăллă йĕркесем питĕ тĕлĕнтеретчĕç. Çавнашкал сăмах вылявне ăсталăх вырăнне хурса эпĕ те кирсановла çĕнĕлĕхпе çырма хăтланса пăхрăм:

Если были вы картавы,
Значит, знали муки рта вы.

Анчах кĕçех, Анатолий Тарасенковпа калаçнă хыççăнччĕ пулас, университет библиотекинче Некрасов вăхăтĕнчи «хĕлхемçĕ-

семпе» паллашрăм. Вĕсем, уйрăмах Минаев, сăмах вăййи тĕлĕшĕнчен Кирсановран чылай маларах тăнă, шухăшĕсем те тарăнрах. Çапла майпа футуризм хӳрешкинче çапкаланса пыракан сăвăçсем мана кăсăклантарма пăрахрĕç. Луганск хулинчен пынă хĕрӳллĕ каччă Александр Кравцов, Мускав поэчĕсене пурне те çывăх пĕлекенскер, мана ытти юхăмсем хушшинче конструктивизм чи малта тăни çинчен çине тăрсах ăнлантаратчĕ. Эпĕ вăл сĕннипе конструктивистсен декларациллĕ «Бизнес» тата «Литература госпланĕ» кĕнекисене шĕкĕлчесе тухрăм. Конструктивизмăн хăйне май тепĕр катехизисĕ — Корнелий Зелинскин «Поэзия, как смысл» кĕнеки те аякра тăрса юлмарĕ. Чăнах та, конструктивизм юхăмĕ пысăк поэтсене пĕрлештерсе тăратчĕ, апла пулин те унăн сăнарĕсен никĕсĕ хăйăр çинче кăначчĕ. Вăл, паллах, вырăс совет поэзийĕн историйĕнче паллă йĕр хăварчĕ, СССР халăхĕсен поэзине те хăйне майлă витĕм кӳчĕ. Анчах ĕмĕрĕ вăрăм пулмарĕ унăн. Критиксемпе поэтсем ăна самаях кӳпкерĕç, А.Безыменский редакцилекен «Удар за ударом» альманах та çав ĕçех тăватчĕ. Тепĕр тесен, халăха хирĕçле çак юхăм пурăна киле хăех «ирхи тĕтре пек, тĕтĕм пек» сирĕлсе кайрĕ. Маншăн пулсан, вăл мереккеллĕ сăнарлăх паллисемпе кăна асра юлчĕ. Калăпăр, машинистка куç харшийĕ директор алă пусса хунă пек курăнни, Владимир Луговской поэта революци кентаврĕпе танлаштарни. Вăл вăхăтри сăвăçсем, социаллă пысăк улшăнусен витĕмне туйнă май, литература юхăмĕсенче хăйсен сăн-сăпатне палăртас тесе çеç мар, самана ыйтнине тивĕçтерес тесе çĕннине шыратчĕç. Маяковский те мĕнле чан çапатчĕ ав:

Çитĕ пире пурăнма
Адам та Ева саккунĕпе.

Оригиналлăхпа тĕлĕнтерес ĕмĕт вăтăрмĕш çулсенче çăмăлçах шухăшлисене çеç мар, çирĕп кăмăллă поэтсене те çавăрса илчĕ. Университета кĕрсен темиçе кунтанах эпĕ хамăр факультетрах вĕренекен Муса Джалильпе паллашрăм. Эпĕ ăна Габдулла Тукай сăввисене тутарла каласа параттăм, вăл мана конструктивизм ашшĕ тесе ят панă Илья Сельвинскин «Улялаевщина» поэмин сыпăкĕсене çĕкленӳллĕн вуласа хуравлатчĕ. Формализмла шкулсен танатинче нумаях тăмарăм пулин те вăл мана пĕр хушă халăхла юхăмран пăрчĕ, тепĕр майлă каласан, ӳсес, аталанас туртăма чарчĕ. Пĕрремĕш сăввăм, 1928 çулта кун çути курнăскер, нимĕнле «изм» калăпĕпе те пачах çыхăнманскерех, нумай хутчен пичетленчĕ, паллă юрă пулса тăчĕ. 1931—1933 çулсенче çырнисене вара, пĕр-икĕ сăвăсăр пуçне, эпĕ хамăн кĕнекесене кĕртмен. Çапла манăн ӳсĕм çулĕ çинче пысăк тăхтав пулчĕ. Эпĕ хăйне май отпускра чир бюллетенĕпе ларнă тейĕн. Чăнах та, пустуй сăмахсемпе çăвар вылятас, тепĕр чухне хими формулисене рифмăлас, риторикăлла шăв-шавпа тĕлĕнтерес «чир» мана та ернĕччĕ ун чухне.

Ударим,
Ударим,
Ударим
Примером
Ударных бригад, —

Жаровăн çак йĕркисем тĕлĕнмелле лайăх пек туйăнатчĕç. Ку тĕслĕхе илсе кăтартса эпĕ хамăн тахçанхи çывăх тусăма Александр Жарова хур тăвасшăн мар. Вăтăрмĕш çулсенче поэзире ытлашши ирĕке кайса кăшкăраканскер, каярахпа вăл «Купăс» ятлă поэмăн авторĕ пулса тăчĕ. Ӳсĕм тапхăрĕнче эпир кашниех кирек хăш вăхăтра та поэзи сулнăкне çапăнма пултарнă.

Шел пулин те, вăтăрмĕш çулсенче вырăс литературинче, уйрăмах критикăра, пулса иртнĕ йăнăшсем наци литературисенче тата килпетсĕртерех тымарсем ячĕç. Сăмахран, чăваш критикĕсенчен хăшĕ-пĕрисем, тĕрĕсрех каласан алли кĕçĕтсе тăракан шăв-шавçăсем, Ноздрёв йытăçă майлă хăтланма пикенчĕç, революцичченхи литературăна пĕтĕмпех пылчăкпа вараласа тăкрĕç, унта реакцилле пулăмсем кăна курчĕç. Чăваш литературине никĕслекен Константин Иванова вĕсем кулак юрăçи вырăнне хучĕç. Ним шухăшласа, виçсе-шайлаштарса пăхмасăр турĕç вĕсем çак ĕçе: вĕсен умĕнче халăхăн аслă поэчĕ мар, каска çине хурса пуртăпа пуçне татмалли автан тейĕн. Çак нигилистла тӳрккес критиксем çирĕплетнĕ тăрăх, Иванов йышăннă халăх форми историлле пĕлтерĕшсĕр тапхăрта, е, тепĕр майлă каласан, чăваш варĕнче рабочи класс ӳтленсе пуласси сĕмленме те пултарайман вăхăтра йĕркеленнĕ, апла пулсан вăл вак буржуаллă çул-йĕр çинче тăрать, çавăнпа та Иванов пултарулăхĕн реакцилĕхĕ пирки те иккĕленме кирлĕ мар. Ик хут иккĕ тăваттă тенĕ пекех. Çакнашкал аксиома çине таянса вĕсем чăваш халăх сăмахлăхне ним шухăшласа тăмасăрах кулак идеологийĕн шăрши кĕрекен çĕрĕк пурлăх тесе шутлатчĕç. Эппин, рабочи класс çук чухне çуралса аталаннă чăваш чĕлхине те кулак чĕлхи тесе каламалла-тăр ку енне кайсан? Анчах вĕсем капла пĕтĕмлетӳ тума хăю çитерейместчĕç, ма тесен хăйсем те чăвашла çыратчĕç.

Тĕрлĕ юхăмсем хушшинчи вак-тĕвек хирĕçӳпе йывăрланнă лару-тăру литературăри çамрăксене питĕ чăрмантаратчĕ, вĕсен пултарулăхне аталантарас ĕçе те кансĕрлетчĕ. Партин Тĕп Комитечĕн 1932 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче литературăпа художество организацийĕсене çĕнетесси çинчен тунă йышăну йывăр лару-тăрăва çăмăллатрĕ. Вăл писательсене пролетари, хресчен тата вĕсен майлисем тесе пайлассине пăрахăçларĕ, пурин умне те халăх пурнăçне сăнлакан халăхла произведенисем çырас тĕллев лартрĕ.

Литература факультечĕ, каярахпа редакципе издательство институчĕ тесе ят панăскер, яланлăхах ырăпа асра юлчĕ. Унта литература тĕпчевĕ, чĕлхе, ытти гуманитари ăслăлăхĕсем енĕпе чи сумлă та чи ятлă профессорсемпе преподавательсем ĕçлет-

чĕç. Пултарулăх семинарĕсене паллă сăмах ăстисем Александр Афиногенов, Николай Асеев, Федор Гладков, Василий Казин, Леонид Леонов ертсе пыратчĕç.

Вĕреннĕ вăхăтра та, каярахпа та эпĕ Мускаври «Коммунар» хаçат редакцийĕпе çыхăну тытаттăм, ятарлă корреспондент пулса чăвашсем йышлăн ĕçлекен хуласене, предприятисене кайса çӳреттĕм. 1933—1934 çулсенче Пушкăртстанри машинăпа трактор станцийĕсен политпайĕсем çумĕнчи хаçатсенче ĕçлерĕм. Очерксем, фельетонсем, тĕрленчĕксем çыраттăм, ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене палăртаттăм, каярахпа çав çынсем ман сăвăсемпе поэмăсен геройĕсем пулса тăратчĕç. Пиншер çын вуламалли хаçат материалĕсем мана халăх чĕлхипе, халăх майлă çырма, тĕрлĕ хурăмсенчен пăрăнма хистерĕç, Константин Ивановран, вырăс классикĕсенчен, уйрăмах хам сума сăвакан Некрасовран вĕренмеллине астутарса тăчĕç. Шăпах çав çулсенче, Приютовăпа Пишпӳлек МТСĕсенче ĕçленĕ вăхăтра, çуралчĕç те тĕпчевçĕсем каланă тăрăх манăн паллăрах та тухăçлăрах произведенисен, «Кĕлпук мучи» поэмăпа «Ту урлă çул» сăвăлла роман сюжечĕсем.

1934 çулта эпĕ Шупашкара куçрăм, Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени секретарĕнче ĕçлеме тытăнтăм. Вăл вăхăтра унта литература тавращĕнчи каппайчăксем вышкайсăр нумайччĕ. Хăшĕ чĕлĕм туртма, хăшĕ халап çапма, хăшĕ укçа-тенкĕ пулăшăвĕ е творчество командировки ыйтма пыратчĕç. Ку япала мана йăлăхтарса çитерчĕ, тата хамăн поэзири ĕçĕм-хĕлĕм те юхăнса кайрĕ. Вара эпĕ Пушкăртри тăван ялăма кайма шутларăм. 1935 çулта, çулла, тĕлĕнмелле илемлĕ те пуян, литературăра «Аксаков вырăнĕ» тесе ят панă тавралăх илемĕпе киленсе çӳрерĕм. Аттепе, унăн тантăшĕсемпе ялти пурнăç çинчен нумай калаçрăм, халапсем, шӳт-кулăш япалисем çырса илтĕм. Ку калаçусем маншăн чăн-чăн пултарулăх лабораторийĕ пек пулчĕç, вĕсенче çиçĕмле çиçекен шухăшсем те, янăраса тăракан сăмахсем те, ни Велимир Хлебников кĕнекисенче, ни ытти çĕрте тĕл пулайми чĕлхе çаврисем пурччĕ. Çапла манăн «Ял хыпарĕ» ятлă кĕнеке çырас шухăш çуралчĕ. Унта пĕр ялта çулталăк хушшинче пулса иртекен ĕç-пуçа кĕртес терĕм.

Çак тĕллев патне мана поэтсемпе критиксем мар, Масаркасси урамĕнче пурăнакан Мăрсук ятлă хресченпе ăнсăртран тĕл пулни илсе пычĕ. Пĕррехинче, саваланă шурă пĕрене çинче калаçса ларнă май, вăл мана хăй вырăнти пуçлăхсен шухăшĕпе килĕшмесĕр Мускава, çĕршыв старости Михаил Иванович Калинин патне кайни çинчен каласа пачĕ. Унччен Пелепейрен ытла ниçта та çитсе курманскер, тĕп хуларан вăл тĕлĕнсех кайнă. Ара, Пелепейре çĕр айĕнчи шыва уçласа хăех витрене тултаракан колонка курнă пулсан, Мускавра вара вăл метропа çӳресе курнă, шавлă урамсем тăрăх çӳресе çухалса кайнă. Хули питĕ тăса пулнипе кĕсьери чĕлĕмне кăларма хăранă,

ч-37781

туртнăçем ÿсĕрме тытăнсан сурчăк сурма ниçта вырăн тупаймасран шикленнĕ.

Халапçă-хресчен каланинчен пĕр пайне илсе эпĕ «Мăрсук мучи Мускава кайни çинчен каласа пани» ятлă сăвă çыртăм. Пĕр-икĕ çултан хамăн тĕп хулана çитсе курнă ентешĕм çинчен Твардовские каласа патăм.

— Тен, эсĕ ун çинчен сăвă та çырнă-тăр?

— Çырнă.

Васкаса тунă йĕркепĕр куçарăвĕ Александр Трифоновича килĕшрĕ, вăл ăна çийĕнчех Борис Иринина пачĕ. Ун чух Иринина хăйне палламан эпĕ, çавăн хыççăн вара çывăх туссем пулса тăтăмăр. Вăл вырăсла куçарнипе çав сăвă «30 кун» ятлă журналта пичетленсе тухрĕ.

Ялта пурăнса мана хам халăх поэзийĕн ылтăн шăнăрне тупнăн туйăнчĕ, çак шырава малалла аталантарас килчĕ, çав тĕллевпе эпĕ Пушкăртри чĕлхепе литература ăслăлăхĕн тĕпчев институтне ĕçе кĕтĕм. Кунти пысăк архиврa, ман телейĕме, чăваш историйĕпе, культурипе çыхăннă материалсем те тупăнчĕç. Пушкăрт композиторĕпе Гебешипе иксĕмĕр пĕчĕк граммофон ярса час-часах чăваш юррисене итлеттĕмĕр. Унта вĕсем пин юрă та ытлаччĕ.

Институтра ĕçлени мана Константин Иванов çырнисене пухса пĕр томпа пичетлесе кăларма май пачĕ. Унта поэтăн малтан паллă пулман хайлавĕсем те кĕчĕç. «Кĕлпук мучи», «Ту урлă çул» кĕнекесене малалла çыртăм, халăхăн чĕрĕ те ансат чĕлхи патне çывхарма тăрăшрăм. Чăнах та, халăх чĕлхи малтан кăйттă пекрех те туйăнать, анчах ăна алла илме çăмăл мар, ма тесен вăл, кашни чĕрĕ япала пекех, кăткăс та йывăр. Çапла çырасси илемлĕ те янăравлă сăмахсем тупса сăвăлассинчен кансĕртерех.

Критиксем, вăл е ку поэт ĕçне-хĕлне хак панă май, унăн пултарулăхĕ халăх юрри-кĕввипе тачă çыхăннине час-часах палăртаççĕ. Анчах вĕсем çав автор нумай поэтран, çав шутра тĕрлĕ юхăмсенчи формалистсенчен те, вĕреннине асăрхамаççĕ, мĕншĕн тесен вăл çырнисенче формализм паллисене тупаймаççĕ. Çав хушăрах çакă та паллă: халăхла ансат çыракан поэтсем те сăвă ăслăлăхне тарăннăн тĕпчеççĕ, Фет, Сюлли-Прюдом, Верлен, Рембо пек поэтсен ĕç меслечĕсене аван пĕлеççĕ. Ман шутпа, поэтсем ăсталăха поэзири чаплă тĕслĕхсенчен, ăнăçлă састашсенчен, ассонанссемпе аллитерацисенчен вĕренсе пыраççĕ тесе çирĕплетекен критиксем хăйсем формалистла çул çине тăраççĕ, ма тесен ăслă та сăнарлă проза яланах поэзие витĕм кÿнине асăрхамаççĕ. Калăпăр, вĕсем нумай поэт Некрасовран вĕреннине калаççĕ, анчах Лев Толстой витĕмĕ пирки ним те шарламаççĕ. Эпĕ хамăн астăвăма тиркеместĕп, анчах асăмра ун пек статья юлайман. Тÿррипех калатăп: эпĕ пĕр калав та çырса курман, анчах поэзири ĕçĕмре мана Л.Н. Толстой, И.А. Гончаров, А.П. Чехов, С.Т. Аксаков, М.Ю. Лермонтов, И.А. Бунин питĕ нумай пулăшнă.

Критиксем хăш чухне хăйсем пахалакан поэт çырнисенче классиксен еткерлĕхĕнчи евĕрлĕ пуплевсем шырани кăлăхах тесе шутлатăп эпĕ. Поэзире рифмăçăсем тата чăн-чăн поэтсем пулаççĕ. Рифмăçăсен хăйсен орбити çук, вĕсем пĕр-пĕр пысăк поэт çумне çыпăçаççĕ те ун тавра çаврăнаççĕ. Унашкал сăвăçсем пенсири канăçлăхра та ячĕшĕн тенĕ пек юрату сăввисем çырса аппаланаççĕ. Ку ĕç вĕсен чиперех пулса пырать темелле. Илет вăл, калăпăр, Пушкинăн «Ижорăна çитсе пыруçăн» сăввине. Ун чух Александр Сергеевич çамрăк, вĕри туйăмлă пулнă, Тверь кĕпĕрнинчен таврăннă май Ижорăри почта станцийĕнче чарăннă та Вельяшева ятлă çамрăк та илемлĕ пикепе паллашнă. Пушкин орбитинчи сăвăç та, Шупашкара арăмĕ патне таврăннăскер, хайхи сăвва асра тытса çамрăк чăваш пикипе курнăçни çинчен сăвă шăрçалама пикенет:

Шупашкара çитсе пыруçăн
Сенкер тӳпенелле тинкертĕм.

Сăвăç вулакана суя туйăмпа улталасшăн, çавăнпа та сăмахĕ яка пулсан та тĕшши çук. Кунашкал авторăн сăвви эрешлĕ тимĕр савăт çине ӳкерсе хунă ылтăн пучахпа пĕрех. Шел, çав пучаха вулакан мар, ухмах чăх чĕппи те сăхас çук. Ку анекдот мар, пĕр чăваш поэчĕ чăн-чăнласах çапла хăтланатчĕ.

Кĕнеке витĕмĕн тыткăнне лекни ман хамăн та пулнă. Анчах, Турра шĕкĕр, çав танатаран вăхăтра хăтăлма пултарнă, И.С.Тургеневăн ăслă сăмахне пĕрмаях асра тытнă: «Касса типĕтнĕ йывăç сыппинчен кирек мĕнле фигура та тума пулать, анчах ăна хĕвел пайăрки темле çупăрласан та унта текех ешĕл çулçă шăтса ӳсмест, çеçкене лараймасть. Хăйĕн хайлавне вилĕ тетте пек çуратакан писатель те çавнашкалах: йӳнĕ хавхалану никам чунне те хускатаймĕ». Тургенев çапла асăрхаттарнă: произведени çăмăллăн çырăнмалла мар, поэтăн хăй аталанăвне тĕрлĕ мехлетсемпе хăвăртлатма хăтланни вырăнсăр. Авторăн хăй хайлавне ача амăшĕ хырăмри ачине хăй мехелĕпе çуратма хатĕрленнĕ пек чĕри çумĕнче усрамалла, ма тесен хайлава автор юнĕсĕр, автор чунĕсĕр пуçне урăх ним те чĕрĕ вăй-хал кӳреймест.

Чăваш калать: курак хăйĕн чĕппине хура пулсан та юратать, шăпчăк чĕппи ăна хитре сасăллă пулсан та илĕртмест. Ку сăмахăн шухăшне çапла ăнланмалла: енчен те курак шăпчăк пек юрлама хăтлансан вăл курак та, шăпчăк та пулаймĕ, ăна хăй ушкăнĕ те, ыттисем те йышăнмĕç. Чăн-чăн поэт кайăк мешехипе пурăнмасть, ытти поэтсене те юрататъ, эгоцентризм чирĕпе чирлемест. Унăн — хăйĕн сасси, хăйĕн чĕлхи, хăйĕн ылтăн тĕшши. Унăн кашни произведенийĕ, антив, пур енчен те пиçсе çитмен пултăр, хăйĕн шухăшĕпе çуралнă, хăйĕн туйăмĕпе шăраннă, хăйĕн ăсĕпе пиçĕхнĕ. Хăйĕнчен хытăран та хытă ыйтни поэта сăмах ӳнерĕн аслă тĕнчине уçса кĕртет.

Илемлĕ произведени, чĕрĕ япала пекех, шухăшпа чĕлхе пай-

рăмĕсенчен тăмалла, кирек мĕнле организм та белокпа витаминран тăнă пекех пĕрлĕхлĕ пулмалла, хăйне хăй хирĕçлемелле мар. Вĕсенчен хăшĕ те пулин виçерен ытлашши пулсан организм вилет. Шыв та, унра водород е кислород ытларах пулсан, шыв пулма пăрахать. Поэтăн пурнăç уйрăмлăхĕсене никамран та ытларах ăнланмалла, шăпчăк юрланине шăпчăк майĕпе сăнарламалла, уйăха та сăвăç е редактор ирĕкĕпе мар, çутçанталăк саккунĕпе тухнине кăтартмалла.

Сăвăç, хăйĕнчен хăй ыйтма пăрахнине пула чăн поэт пĕлтерĕшне çухатнăскер, мĕн çинчен çырас тенине туллин тĕпчеймест, пĕтĕмлетӳ тума хатĕрленсе çитеймест, вара пĕр юмахри путишле герой пек хăтланма тытăнать: хаваслă туйра хурланса йĕрет, çын пытарнă чух савăнса ташлать. Вăл чаплă поэтсен йăла-йĕркери тыткаларăшĕсене пĕтĕмпех пĕлет, вĕсем мĕн çинине пĕлет, кăкăр кĕсйинче чаплă кулинарсем хатĕрленĕ менюсем чиксе çӳрет, хăйне çапла тыткаланипе айван критиксене тĕлĕнтерет. Халăхпа тĕл пулмасть, калаçмасть вăл, юлташĕсемпе те телефонпа кăна хутшăнать, шухăшсăр, анчах янăравлă рифмăсем тупать, кирлех пулсан хитре сăмах çавришĕн хăй ашшĕне те сутса яма пултарать.

Çамрăкрах чухне унашкал çыравçăсене редакцисенче, уйрăмах пултарулăх çурчĕсенче çине-çинех тĕл пулаттăмччĕ эпĕ. Вĕсем мана хăйсем пек пурăнма, хăйсем пек çырма хăнăхтарасшăн тăрăшатчĕç. Анчах манăн тĕп вĕрентекенĕм, ача чухнехи пекех, çĕр-аннеччĕ. Мускавра та тĕлĕксенче «Нарспи» поэмăри Силпи сăртламĕ çинчен юхса анакан шывсен шаркавне илтеттĕмччĕ. Китайгород текен вырăна, букинистсем çитмĕл те çичĕ тĕрлĕ поэтсен кĕнекисене сутнă çĕре, вĕçĕмех çӳреттĕм.Çĕр сăнарне Сергей Есенин, Николай Клюев, Сергей Клычков çырнисенче шыраттăм. Анчах вĕсен сăввисенче ĕлĕкхи ялсем кăначчĕ. Мана вара çĕнĕ пурнăçра хăйĕн ăраскалне шыракан ял сăнарĕ интереслентеретчĕ. РАПП критикĕсем ял çинчен çыракан поэтсене хресчен юрăçисем тесе тăрăхлатчĕç пулсан та маншăн тесен çĕр яланах тĕп вырăнта тăчĕ. Эпĕ Вергилин «Ял поэмисене» нумай хутчен вуланă, унти ешерекен шăплăхлă тĕнче ӳкерчĕкĕсем чăнах та ытарми илĕртӳллĕ, анчах унашкал идилли мана çырлахтарма пултараймасть. Çав хушăрах çак чăн-чăн поэзи мана совет тапхăрĕнчи ял пирки шавлă юрăсемпе хăлаçлануллă, риторикăллă сăвăсенчен сыхланма вĕрентетчĕ. Гафиза та, тухăç поэзийĕн ытти улăпĕсене те нумай вуланă эпĕ. Кĕлчечекпе шăпчăка мухтакан поэзи йĕркисем маншăн ют пулнă. Пурнăçра вара шăпчăк пахчара шăрантарнине юрататăп, И.С.Тургенев мухтакан Курск шăпчăкĕн ылтăн сасси музыка çырăвĕнче вун тăватă нота паллипе çырăннинчен тĕлĕнетĕп. Тухăç поэзийĕн шăпчăкĕсем чаплă садсенче юрлаççĕ, пирĕн шăпчăксем вара пачах урăхла, вĕсем вăрмансенче, çырма хĕрринчи вĕтлĕхсенче шăрантараççĕ, суха çыннине йывăр ĕçре хавхалантараççĕ, унăн чунĕнче эстетикăл-

ла таса туйăм çуратаççĕ, тăван çĕре ĕмĕрех юратма, упрама вĕрентеççĕ. Л.Н.Толстой, Н.А.Некрасов произведенийĕсем мана çĕре хисеплеме, хамăн ĕçпе пултарулăхăмпа чечексен шăршисене, çичĕ тĕслĕ асамат кĕперне, çепĕç сасăллă сарă кайăка, хура курака, нимĕнле йывăр лару-тăрура та — ни шăрăхра, ни шартлама сивĕре — кантăкăм умĕнче чĕвĕлтетме пăрахман чăтăмлă та паттăр çерçие мĕнле те пулин пархатар кӳме хистетчĕç.

Эп час-часах яла кайса пурăнатăп. Çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те. Ниме пăхăнман çил-тăмана та, кĕрхи чарусăр çумăра та, çуллахи шăрăха та, чечеклĕ çуркуннене те юрататăп. Çурхи ешерӳ çинчен кăна çыракан поэтсен сăввисене тарăхса вулатăп. Вĕсен туйăмĕсем мана шапа еверлĕ туйăнаççĕ. Шапа çанталăк сивĕтсен шăнса хытать те пăр айĕнче хĕлĕпех çывăрать. Çурхи ăшă ешерӳ çитсен вăранать те хайхи — пĕтĕм вăйĕпе кăваклатма тытăнать. Çутçанталăк ăна шăпах çавăн пек шăпа парнеленĕ. Поэт чĕринче те шапан сивĕ юнĕ кăна пулни — питĕ начар япала. Ку вăл сăвăç чунĕнче тĕп туйăм — çĕр-аннемĕре юратни — çуккине пĕлтерет. Çавăнпа эпĕ уйсемпе вăрмансем тăрăх сехечĕ-сехечĕпе çӳрессине хамăн тивĕç тесе шутлатăп. Пуçа алă тупанĕсемпе йĕкĕрлесе çĕр çинче месерле выртасси те ырлăх маншăн. Çĕрĕн кашни тăваткалĕнче курăксем, нăрăсем, кăткăсем, лĕпĕшсем, флорăпа фаунăн ытти пайрăмĕсем туслăн пурăнаççĕ, çав хушăрах хăйсем хушшинче пурнăçшăн кĕрешеççĕ. Çавна кура манăн та пĕр вăхăтрах кăштах агроном та, физик та, химик та пулмалла, вара тин эпĕ хĕвел айĕнчи, уйăх айĕнчи, çăлтăрлă тӳпе айĕнчи çĕрĕн поэзилĕхне ăнкарса илме пултарăп. Эпĕ вышкайсăр йывăр ĕç тăвакансемпе — çĕр чавакансемпе — тĕл пулкаланă. Вĕсем каланă тăрăх, çăл тĕпĕнчен пăхсан кăнтăрла та çăлтăрсем курăнаççĕ. Поэтăн та çавăн пекех ытти çынсем курманнине курмалла, туйманнине туймалла. Вăл çав туртăма кашни кун аталантарса пытăр. Поэт талантне укçалла туянма çук, вăл чунпа пĕрле çуралать. Апла пулин те талант пур-ха тесе каппайса ларни вырăнсăр, пĕлӳлĕхе пур енĕпе те куллен ӳстермелле. Таланта, шахмат, футбол, чупу-сикӳ ăстисем пек каласан, яланах спорт форминче тытмалла.

Паллах, Мускав литературăпа художество организацийĕсене çĕнетсе улăштарасси çинчен йышăну кăларнă хыççăн шыравăмсенче пĕр-пĕччен юлмарăм эпĕ. Мана Михаил Исаковский, Александр Прокофьев, Борис Корнилов, Павел Васильев сăввисем савăнтаратчĕç. Çапах та эп суйласа илнĕ темăра пысăк формăллă произведени курмарăм. Кĕçех Михаил Шолоховăн «Уçнă çерем», Федор Панферовăн «Бруски», Иван Макаровăн «Стальные ребра» произведенийĕсемпе танлашакан колхоз поэми килессе шанаттăм. Хаçатсенче хăй кукăль пиçсе тухнă пек килсе çитни çинчен пĕлтерсе Александр Безыменскин «Ночь начальника политотдела» поэми, содержанийĕпе те, формипе

те тымарсăр япала, шăв-шав çĕклерĕ. Тулли пучахлă ылтăн кĕлте çинчен каланă сăмахсем нумайччĕ унта, анчах вăхăтлăх хускалнă шăв-шав хăвăрт тамалчĕ, кĕçех поэма хăй те манăçа тухрĕ. Юлашкинчен, «Литература хаçачĕн» пĕр номерĕнче, виççĕмĕш страницăраччĕ пулас, эпĕ хам палламан-пĕлмен Александр Твардовский поэмин сыпăкне вуларăм, кăштахран «Красная новь» журналта «Страна Муравия» пĕтĕмпех пичетленсе тухрĕ.

Поэма уçăмлă та кал-кал чĕлхипе тӳрех тыткăна илчĕ. Инверси тени пачах çук унта, кашни сăмах хăй вырăнĕнче, автор йывăр шухăшлă хресчен сăнарне тĕлĕнмелле курăмлă ӳкерет, çав тапхăра вăйлăн сăнлать. Умра Никита Моргунокăн пĕрре синкерлĕ, тепре кулăшла шăпи тĕвĕленсе, ӳссе, кĕретленсе пырать. Вăл Раççей тăрăх телей çĕршывĕ шырама тухса кайни чуна пырса тивет. Курăр-ха, мĕнле шухăшлать вăл:

Пĕр пĕрчĕ çеç акас пулсан та
Вăл хăвăн шутланать унта.

Твардовский поэми вут-хĕлхемлĕ вырăс чĕлхин чи паха тĕсĕсемпе выляса тăратчĕ, малтан пуçласа мĕн вĕçне çитиччеех традицилле сăвă калăпне пăхăнатчĕ. Унăн никĕсĕ те çĕнĕччĕ, — унашкал произведение вулакан тахçанах кĕтнĕ, мĕншĕн тесен декадентла сăвăçсен шăв-шавĕ, сăмах вылявĕ çинче тытăнса тăракан пули-пулми тетте-шăрçа пурне те тахçанах йăлăхтарса çитернĕ. Шăпах çав çăмăлттай састашçăсем хушшинче вăл вăхăтра вырăс чĕлхине çĕнетсе улăштарас текен киревсĕр сăмахюмах çӳретчĕ. Ку ĕçе чылайăшĕ Велимир Хлебников ячĕпе çыхăнтаратчĕç. Ку поэт çинчен, ман шутпа, тĕрĕс маррине те нумай çырса тултарнă, ма тесен унăн вăхăчĕ, вăл ĕçленĕ йывăр лару-тăру халь манăçа тухнă. Тепĕр тесен, хăйĕн шыравĕсене вăл укçа-тенкĕшĕн мар, чăнах та сăвă калăпĕн виçисене тĕрлĕлетес пархатарлă тĕллевпе, таса чунпа тунă. Çавăнпа та унăн таса ятне вырăс поэзийĕн принципĕсене ишес тĕллевпе тĕлли-паллисĕр эстетланса çӳрекен вĕçкĕнсемпе çыхăнтарма кирлĕ мар тесе шутлатăп. Велимир Хлебников ячĕ поэзи керменĕнче ĕмĕрех пулĕ, хăшне-пĕрне вара критика мар, пурнăç хăех унтан кăларса пăрахĕ. Халăх ӳнерĕ таçтан аякран турист чăматанĕпе илсе килнĕ тăрлавсăр япалана йышăнаймĕ.

Критика пĕлтерĕшĕ анăçри суя юхăмсен витĕмĕпе чирленĕ сăвăçсене тĕрĕс çул çине кăларас ĕçре те пысăк пулмалла. Чиртен сыватас ĕçре Раççей поэзийĕн чи ырă тĕслĕхĕсемпе усă курмалла, ма тесен литературăри сиенлĕ бациллăсене вĕсем çеç сиенсĕрлетме пултараççĕ. Твардовскин «Страна Муравия» поэми хăйĕн эпикăлла анлăшĕпе тулли шыв пек ирĕклĕн, лăпкăн юхать. Пĕрремĕшĕнчен илсен, вăл декадентла поэзие хирĕç хускалнă кĕрешӳре çуралнă, иккĕмĕшĕнчен, суя риторикăлла, ял ыйтăвĕсене Некрасовăн Оболт Оболдуевĕнчен ытла тĕшмĕртеймен, ырашпа урпана уйăрса илеймен авторсене хирĕçлесе çырнă

талантлă произведени. Ҫав авторсем хăйсен пултарулăхне ял пурнăҫне вĕренсе ҫитрĕмĕр тесе кăкăр ҫапатчĕҫ, анчах хăйсем ял ҫинчен хаҫат-журнал статйисем вуланипех, вăхăтлăх командировкăсене кая-кая килнипех ҫырлахатчĕҫ. Мускава таврăнсанах ял ҫинчен ҫĕнĕ хайлавсем шăрантарма тытăнатчĕҫ, унта вара ҫĕмĕрчĕ те, хуратулĕ те, ҫĕрулми те пĕр вăхăтрах ҫеҫкене ларатчĕҫ, ҫурла уйăхĕнче пахчара шăпчăксем юрату юрри юрлатчĕҫ, колхозниксем пĕвере карас, уланкă, ҫăрттан ĕрчететчĕҫ.

Твардовский поэми, ҫав тапхăрти ял пурнăҫне туллин те витĕмлĕн сăнласа кăтартнипе пĕрлех, пурнăҫа ытлашши илемлетсе сăрлакан авторсемшĕн чăн-чăн шкул пулчĕ темелле, ма тесен хăшĕсем пурнăҫра пулман япаласенех пулнă пек туса кăтартатчĕҫ. Сăмахран, пĕр поэма прологĕнче тĕп персонаж хур кĕтĕвĕ кĕтет, вĕҫĕнче вара ҫич ҫĕр киле пĕрлештерсе тăракан пысăк колхозăн ăслă ертӳҫи пулса тăрать.

Твардовскин ҫивĕч сюжетлă, илемлĕх енчен пысăк шайра ăсталанă, ҫав хушăрах ансат вуланакан поэми совет поэзийĕнче ҫул уҫакан произведени пулса тăчĕ. Ăна пурнăҫ ҫине тĕрлĕ куҫпа пăхакан, литературăра тĕрлĕ юхăмра тăракан писательсем те пĕр пек ҫĕкленӳпе йышăнчĕҫ. Вĕсем хушшинче — Александр Фадеев, Николай Асеев, Борис Пастернак, Вера Инбер, Корней Чуковский.

Маншăн тесен ку поэма хресчен сăнарĕсен тĕнчин туйăнчĕ. Эпĕ хам чăваш ялĕсенче халăх пултарулăхне тĕпчесе тупнă ҫулйĕр тĕрĕс пулнине ăнланса илтĕм, хăш-пĕр критиксем хирĕҫлесен те ҫав ҫулран пăрăнмарăм. Паллах, тӳррĕмĕнех Твардовский витĕмне кĕрсе ӳкесси те пулма пултарнă, анчах эпĕ ҫав туртăмран хамах хătăлтăм. Манăн сăвăлла романăн геройĕ, Каллря, хăй ҫуралнă ялтан ниҫта та тухса каяс шухăшлă мар, хăйĕн тăван ҫĕрĕ ҫинчех юласшăн, анчах колхоза кĕресшĕн мар, хăй харпăрлăхĕпе пурăнасшăн. Пĕрлешӳ чирĕ ан ертĕр тесе вăл чăваш тĕнĕн йĕркине пăхăнса ҫĕрле кусар тытса пӳрчĕ тавра кĕлĕ туса ҫаврăнать, хуҫалăха колхоз шăрши ерессинчен сыхланас тесе ҫӳлтен пиллĕх ыйтать.

1936 ҫулта мана Шупашкара чĕнсе илчĕҫ. Кунта писательсен Союзĕпе искусство ĕҫĕсен управленийĕ «Нарспи» поэма тăрăх пĕрремĕш чăваш опери валли либретто ҫырма хушрĕҫ. Эпĕ, К.Иванов пултарулăхне нумай ҫул тĕпченĕ, тăванĕсемпе тĕл пулса асаилӳсем пуҫтарнă май, ун ҫинчен монографи кăларма хатĕрленеттĕм. Пушкăрт тĕпчев институтĕнче ĕҫленĕ чух пухнă чăваш юррисем те алă айĕнчехчĕ. Ҫав материала ҫĕнĕрен вуласа тухрăм, «Ту урлă ҫул» тата «Кĕлпук мучи» алҫырăвĕсене аяккарах сирсе хутăм, пĕтĕмпех музыка тĕнчине кĕрсе кайрăм, либретто ҫырма пикентĕм. Пурнăҫра пĕрремĕш хут профессилле поэт пулса тăтăм. Анчах нумайлăха мар, темиҫе кунлăха кăна. Вăл вăхăтра ман тавра пĕр йăрă ҫын тек-текех явăнатчĕ, литература ĕҫĕн суя мухтавĕ патне ҫăмăл ҫулпа утатчĕ вăл. Эпĕ ăна ҫывăх

тус выранне хурса йышăнтăм. Вăл вара, либретто ĕçĕнче пулăшап тесе, либреттăн пĕрремĕш пайне, халăх юррисен тетрадьне ик-виç кунлăха илчĕ те хăй искусство ĕçĕсен управленийĕпе çĕнĕ килĕшӳ туса либретто çырма Ленинграда командировкăна тухса шăвăнчĕ. Крылов юптарăвĕсене эп шкулта вĕреннĕренпех аван пĕлеттĕм-ха, анчах вĕсен геройĕсем чĕрчун тĕнчинче анчах пуль тесе шутлаттăм. Çав либретто сыр татăкĕ, профессилле сăвăç — чее тилĕ пулма пултарасса тĕлленмен те.

Ку ĕçе мĕншĕн асилтĕм-ха? Кунпа эпĕ сарă туталлă сăвăçсене вăтам тата аслă шкулсенче вĕренмесĕрех, тырă мĕнле ӳснине, сад мĕнле ĕрченине, промышленность епле ĕçленин вăрттăнлăхĕсене алла илмесĕрех профессилле литература çулĕ çине тăма хăтланни йăнăш та сăтăрла ĕç пулнине çирĕплетесшĕн пултăм. Эп астăвасса, вĕсем газлă шыв ĕçетчĕç, çав хушăрах хупах тата хулиган сăввисем çыратчĕç, пичетре вĕсен ячĕ тавра пĕрмай шăв-шав тăратчĕ. Халăх кăмăлне шута илетпĕр тесе вĕсем çавăнтах агитацилле сăвăсем те çыратчĕç, сăвă йĕркисене пайласа, картлашкаллă туса шутне ӳстеретчĕç, хăйсене ытларах гонорар тӳлеме ыйтатчĕç, тӳлемесен каллех шăв-шав çĕклетчĕç. Либретто, сюита, пьеса, калав е роман çырма искусство организацийĕсенче е ведомствăсенче килĕшӳ туса укça илесси ним те марччĕ вĕсемшĕн.

Унашкаллисем литературăра нумаях марччĕ, анчах тĕрлĕ кантурсенче ларакан ăссăр та явапсăр тӳре-шара умĕнче шанăçа кĕме, суя шăв-шав çĕклеме питĕ маçтăрччĕ вĕсем. Хамăр умри аслă çынсене тиркесе тăкасси те ним те марччĕ чыссăрсемшĕн. Сăмахран, вĕсемех Иван Яковлевпа Константин Иванова та кулакпа буржуази тата пуппа миссионер идеологийĕн çыннисем тесе ярлăк çакрĕç.

Хăравçăн куçĕ пысăк тенешкел, нигилистла критиксем «чăваш халăхĕ» тенинче айăп шырама тытăнчĕç. Кам çав сăмах çаврăнăшĕпе усă курать, вăл тӳрех буржуаллă националист пулса тăрать. Çавнашкал «марксистсенчен» пĕри хăй сăвă çырса пăхмасăрах «Сăвă çырасси» ятлă статья пичетленĕскер, чăваш литературин антологине редакцилетчĕ. Çавскер поэзире те, прозăра та — ăçта «чăваш» сăмах пур, тӳрех «ĕçчен» сăмахпа улăштаратчĕ. Ку шухăша хирĕçлеме ун чухне май çукчĕ. Пурпĕрех эпĕ çав «марксиста» кĕнекене «Чăваш литературин антологийĕ» мар, «Чăваш ĕççыннисен антологийĕ» тесе ят пама сĕнтĕм.

Автобиографи — вулаканпа чунтан калаçни. Çавăнпа та пурнăçăмра вăрах вăхăта пынă синкерлĕх çинчен те каламаллах пулĕ. Ун çинчен эпĕ ниепле те Пушкин пек: «Иртнисем сăваплă пулĕç» тесе калаймастăп.

Чăннипех талантлă çынсем йывăр вăхăтра та элекпе ултава сирме, чăнлăха ĕненме, çыншăн çын тус та тăван текен принципа тытса пыма пăрахмарĕç. Нĕрсĕр чунлă этемсем таса писательсене аркатакан статьясемпе, ăçта та пулин тухса каланă сăма-

хĕсемпе ура хурсах пычĕҫ. Ҫавнашкал айван критиксенчен пĕри, ача-пăча юмахне пахаланă май, «Ҫĕрле вăрманта выҫ кашкăрсем уланă» тенĕшĕн пĕр автора ҫине-ҫинех аҫапа та ҫиҫĕмпе ăшалатчĕ, совет влаҫне хирĕҫ ҫырать тесе, патриотлăх туйăмĕ ҫук тесе айăплатчĕ, хăй шухăшне кашнинчех пĕр пек пĕтĕмлететчĕ: «Ку элек. Совет Союзĕнче никам та, ним те выҫă пулма пултараймасть».

Тепĕр пулăм та час-часах аса килет. 1936 ҫулхи пĕр уяр кун эпĕ Атăл леш енчи вăрманта кĕсьене темиҫе йĕкел илсе чикрĕм, таврăнуҫăн хула урамĕнче кайăк хушамачĕллĕ пĕр поэта тĕл пултăм, унпа Юман псевдонимлă писатель ҫинчен калаҫрăм. Ҫак поэт тепĕр ҫулталăкран урамри калаҫăва аса илнĕ, эпĕ 1936 ҫулхи кĕркунне национализм элемĕ вырăнне йĕкел чиксе ҫӳрени ҫинчен пичетре те ҫырнă, пухура та тухса калаҫнă. Эпĕ вăл вăхăтра хулара пулман, автомобиль катастрофине лексе район пульницинче вырăнтан хускалми выртнă. Пичетре усал ят сарнă пирки ман ҫине тухтăрсем те сиввĕн пăхатчĕҫ. Ҫавăнпа та, гипспа пулйн те, пульницара сывалса ура ҫине тăрас шухăша пăрахма тиврĕ. Анчах ырри те пулман темелле мар. Хулай туйисемпе Мускава ҫитнĕскер, эпĕ писательсен Малеевкăри пултарулăх ҫуртне пырса вырнаҫрăм. Чылай вăхăт хушши ыйхăсăр асапланнăскер, ҫав кавирсемлĕ хăтлă пӳлĕмре эпĕ пĕр вăранмасăр вун сакăр сехет ҫывăрнă. Алăкран шакканипе тин куҫа уҫрăм хайхи.

— Чĕрех-и эс? — илтĕнет сасă.

— Хальлĕхе вилмен-ха, — тесе алăка уҫрăм.

— Твардовский, — ыраттарасран асăрханса тенĕ пек алă пачĕ мана яштак кĕлеткеллĕ, кăмăллă сăн-питлĕ ҫын.

Иккен, эпĕ пачах сасă паманнинчен шикленме тытăннă дежурнăйсем поэт патне поэт кĕрсе пăхни вырăнлăрах тесе шутланă. Тепĕр ҫур сехетренех, Александр Трифоновичпа пĕр сĕтел хушшинче каҫхи апат тунă хыҫҫăн, эпĕ ура ыратнине туйми пултăм, чуна шӳт-кулăш таврăнчĕ, суранăма эмел пулса имлерĕ. «Страна Муравия» поэма сыпăкне вуласа тухсанах ăна ҫыраканĕпе тĕл пулас шухăш ҫуралнăччĕ манăн. Ҫак тĕлпулу вара ăнсăртран персе аннă телей пек килчĕ, ма тесен маншăн вăл вăхăтра кашни ăшă сăмах хаклăччĕ. Шăпах ҫав юлташлăх алла кăранташ тытма, сĕтел ҫине шурă хут кăларса хума хистерĕ те.

Твардовскипе тĕл пулнисем, ăшпиллĕн калаҫнисем чун-чĕрене варăнса юлчĕҫ, анчах вĕсене пурне те автобиографире кăтартма ҫук. Нумай ҫӳрерĕмĕр эпир ун чухне Кивĕ Руза тăрăхĕнчи вырăнсемпе. Чăннипех талантлă ҫын кăмăлĕпе те уҫăччĕ. Туясенчен хăтăлнă хыҫҫăн эпĕ пĕр кана Голицынăра, унтан Мускавра пурăнтăм. Александр Трифоновичпа унăн мăшăрĕ Мария Ларионовна мана хăйсен Пысăк Могильцовски тăкăрлăкĕнчи тăвăр пӳлĕмĕнче яланах хапăлччĕ, сывлăх енĕпе те, апат-ҫимĕҫ енĕпе те пулăшсах тăратчĕҫ. Мана пула Александр Трифонович час-часах Чернышевский ячĕпе хисепленекен историпе фило-

софи институтĕнчи вĕренĕвĕнчен те, ĕçĕнчен те татăлатчĕ, эпĕ мĕнле пурăннипе интересленсех тăратчĕ. Пĕррехинче, эпĕ поэзи хĕсметĕнче чăнах та кирлĕ çынах иккенне туйса-и, тен, вăл мана медицина пулăшăвĕ парас тĕллевпе Сперанский академик патне килне ертсе кайрĕ.

1938 çулхи çуркунне эпĕ Шупашкара куçса килтĕм те республика хаçатĕнче корреспондентра ĕçлерĕм, кĕркунне Чĕмпĕре куçса кайрăм, унти Чăваш педагогика училищинче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентрĕм. Манăн тĕрлĕ курссенче кунне вун икĕ урок ирттермелле пулнă пулсан та эпĕ архивсемпе библиотекăсенче ларма вăхăт тупаттăм. Çавăн пекех хулари ватă çынсемпе тĕл пулаттăм, ытларах Кузнецов пенсионер каласа панисене итлеме юрататтăм. Унта эпĕ Никифор Охотников çинчен поэма та çыртăм.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçлансан эпĕ халăх çарĕн отрядĕнче çапăçнă, 1942-мĕш çулхи çу уйăхĕнче вĕренӳ батальонĕн курсанчĕ пулнă.

Çав вăхăтри пулăмсене аса илмесĕр хăварас килмест. Мана ефрейтор е кĕçĕн сержант званине памалли вăхăт çитсен пĕр пăтăрмах пулса тухрĕ. Пирĕн батальон вăрманта, Поворино станцийĕ çывăхĕнче, вырнаçнăччĕ. Манăн пĕррехинче часовой пулса штаб умĕнче тăма лекрĕ. Çĕр пӳртре батальонăн комиссарĕпе начхим ларатчĕç. Вĕсем литература пирки калаçма пуçласан эпĕ хăлхасене тăратрăм та итлеме тытăнтăм.

— Лайăх çырать Толстой. Унăн «Çăкăрне» вуласа тухрăм, — терĕ начхим.

— Çапла, Толстой маттур. Унăн «Война и мир» романне те вула, — терĕ комиссар.

Икĕ Толстойран пĕр çын тунипе эпĕ виççĕмĕш пирки те аса илтерес терĕм. Землянка енне çаврăнтăм та:

— «Князь Серебряный» романа та вулăр, — терĕм.

— Ку мĕн япали? Аслисем калаçнă чухне рядовойăн мĕн ĕç пур! — кăшкăрчĕç иккĕшĕ те.

Енчен те калаçу «максим» пулемет çинчен пулнă пулсан эпĕ пĕр сăмах та чĕнместĕмччĕ, анчах литература пирки пыракан пуплевре хĕрсе кайнăскер тем те пĕр каласа пĕтертĕм, çавăншăн мана виçĕ талăклăх гауптвахтăна лартрĕç.

Ăшă кунсенче сулхăнта выртасси, хăш чух вутă çурасси маншăн питĕ лайăх пулчĕ. Ку вăл çурăм çине пулемет çакса тар кăларса чупасси мар-çке! Виçĕ кунти канăçлă вăхăтра арăма та салтак пурнăçĕ çинчен çырса пĕлтересшĕнччĕ, анчах батальон командирĕ Мягченко аслă лейтенант мана гауптвахтăран хăтарчĕ. Кайран вара батальон командирĕ дивизи штабĕнче эпĕ гауптвахтăна виçĕ Толстойшăн лекнине каласа парса култарнă.

Тепĕр темиçе сехетренех мана дивизи комиссарĕ Мельников хăйĕн патне чĕнсе илчĕ те «Родина зовет» хаçатра ĕçлеме хушрĕ.

Часах пирĕн дивизи Воронеж патĕнче тăшманпа тытăçрĕ.

Мана, корреспондента, пĕр ротăран теприн патне шуса çӳреме тиврĕ. Дон хĕрринче оборонăра тăнă чухне эпĕ салтаксемпе командирсен ячĕпе пĕтĕм чăваш халăхĕ патне сăвăлла çыру çырса ятăм.

Корреспондент ĕçĕ çăмăл мар. 1943 çулхи нарăс уйăхĕнче нимĕç бомбин сывлăш хумĕ мана çĕклесе çапрĕ, çапла эпĕ çурăм шăммине амантрăм.

Хамăн тăван чĕлхепе ĕçлеме манăн вăхăт пулман. Вăрçă сăввисемпе çырнă кĕнеке пĕчĕк пулчĕ, анчах та хамшăн тесен унăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Пĕтĕм вăхăта хаçата параттăм, кашни кунах тĕрлĕ очерксем, заметкăсем çыраттăм.

Вăрçă çулĕпе Прагăна çитрĕм, 1946 çулхине киле таврăнтăм. Чăвашгиз редакторĕ пулса 1949 çулччен ĕçлерĕм. Ман пĕрремĕш сăвă тухни 20 çул çитсен хам мĕн çырнине, кăларнине тĕрĕслесе тухрăм. Ĕç хĕсметĕнчен тухса «Ту урлă çул» сăвăлла романа тата «Кĕлпук мучи» поэмăна çырса пĕтертĕм. Çак кĕнекесем 1952—1954 çулсенче Мускавра кун çути курчĕç. Хаçатсем çырнă тăрăх ку хайлавсем ăнăçлă пулса тухрĕç, вĕсене вырăс вулаканĕ патне çитерме пултаруллă куçаруçăсем Павел Дружинин, Борис Иринин, Николай Чуковский, Лев Пеньковский пулăшрĕç.

Ман пĕчĕкренех нумай пĕлес, курас килетчĕ. Каярахпа, пĕлӳ илнĕ хыççăн, хамăн кĕнеке çырас туйăм çуралчĕ. Тĕрлĕ хуласенче, ялсенче корреспондент ĕçĕпе ĕçлерĕм. Мĕнле те пулин пушă вăхăт тупăнсанах поэзи тĕнчинче çӳрерĕм. Пĕтĕм вăя пухса сăвăсем, поэмăсем, трагеди, сăвăлла романсем çыртăм. Мана çак ĕçе тунă чух ятарлă хăтлăх кирлĕ пулман, ялти мунча пур енчен те тивĕçтеретчĕ.

Каярахпа эпĕ «Акăшкӳл» ятлă пысăк сăвăлла роман тата Константин Ивановăн «Нарспи» поэмин кĕввипе трагеди, «Çĕр» поэма çыртăм. Вăл Урал эпопейин пĕрремĕш кĕнеки шутланать.

Çулсем те уйăхсем каяççĕ эпикăлла хайлавсем çырма. Ĕмĕр çамрăк та ĕмĕр аслă Пушкин сăмахĕсене эпĕ яланах пурнăç саккунĕ вырăнне хуратăп:

> Эс хăвшăн ху чи шанчăклă тӳре,
> Ху çеç тĕп-тĕрĕс çул тупан ĕçре.

Çапах та автобиографилле тĕрленчĕкре хам çырнисене хак парас шухăшăм çук. Вăхăт темĕнле тивĕçмесен те пӳлĕмĕм хальхи самана çилĕшĕн уçă, кĕтĕр вăл, чуна самана çилкĕçĕ тутăр. Çĕр — манăн тĕп тема, эппин унăн кашни тăваткăлне халăх юратăвĕ çитинччĕ. Çав тĕллевпе çыратăп та эпĕ статьямсене. Ан тив, çĕр ĕç ăслăлăхĕн çитĕнĕвĕсем халăх ăс-хакăлĕпе сыпăнса пыччăр, малалла аталанччăр.

Хăш чухне хăйсен суя илемĕпе мĕн пур уйсене хупласа хуракан çум куракĕсене хирĕç хаяр статьясем те çыратăп эпĕ. Çав сăтăрлă чечексене мухтакан поэтсем те пур. Ман шутпа вĕсем литература пуссине çум куракĕ акаççĕ.

Хам темăсен ытамĕнче пурăнассине ылтăн вăхăт вырăнне хуратăп эпĕ. Турра шĕкĕр, çав хавхалану чылай чухне уйăхĕ-уйăхĕпе пырать. Ун чухне эпĕ пархатар кӳрекен çумăра та, çумăрлă куна та е çил-тăманлă каçа та, хама ӳле-ӳле çĕнĕ кĕвĕ сĕнекен мăрьене те сăвва кĕртетĕп. Акă халĕ те Атăл леш енчи хырсем çийĕн хĕвел çĕкленет, уçă кантăкăмран çывăхра авăтакан кук-кук сасси кĕрет. Вăл ĕшенерех панă курăнать, хăйĕн юлашки пăнчипе ирхи хавхаланăвне вĕçлет. Анчах уçă тӳпере эрлĕн шыв ыйтса нăйкăшакан текерлĕк сассине илтсен çак сăмахсене те каласа хăварас килет.

Сăмах май, шыв тата критика çинчен. Пирĕн, чăвашсен, критика çук тенĕ Пушкин. Каласса куна вăл чăвашсен çĕнĕ çырулăхĕ никĕсленичченех каланă. Аслăлăх тĕнчинче пĕр чăваш çеç — Иакинф Бичурин, Пушкинăн тата декабристсен тусĕ, Пекинран Петербурга авалхи китай çырулăхĕн палăкĕсене вун ултă тĕве çине тиесе килнĕскер, паллă пулнă. Халĕ те, филологи ăслăлăхĕн кандидачĕсемпе докторĕсем çителĕклех пулин те, пирĕн хамăр литературăна хисеплесе, Пушкин каланă пек чунтан юратса тĕпчекен критика çук. Ĕлĕк ман кĕнекесене пĕр вăхăтрах мухтакан тата ятлакан рецензисем тухатчĕç. Чун-чĕре вăй-халне хурса çырнă произведенисене те аркатса тăкасси ним те марччĕ çав тĕпчевçĕсемшĕн. Халĕ вара, мана искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн тата халăх поэчĕн ятне панă хыççăн, ман ята ырăпа асăнма тăрăшаççĕ. Маншăн тесен хайлава пĕлсе, йĕркеллĕн пахалани лайăхрахчĕ. Кирек мĕн калăр та, эпĕ те хамран хам вĕренсе пыратăп, юратнă писательсен ăсталăхĕ вара маншăн чăнлăх виçи пулса тăрать. Сăвă çыракан пулин те эпĕ проза юрататăп, мĕншĕн тесен вăл шухăша уçăмлăн калать, сăмаха кăлăх тăсса кайнине тӳсме пултараймасть, пуплеве инверсисемсĕр, ритмпа рифмăшăн пăсмасăр калать.

Поэт, усăллă ĕç тăвакан ытти професси çынни пекех, ăшă сăмах та илтесшĕн. Çав сăмаха ман пирки 1962 çулхи çурла уйăхĕнче Андриян Николаев каларĕ, хăш çыравçăсен хайлавĕсем ытларах килĕшеççĕ тесе ыйтсан ман хушамата та асăнчĕ. Космонавт хак пани мана çĕнĕ лирикăлла поэма çырма хавхалантарчĕ. Халлĕхе ун çинчен нимех те каламăп, ма тесен чăваш туман тиха пилĕкне авма хушман.

Мана Андриян Николаев нимрен ытла ĕçе юратни çинчен пĕлтерни килĕшрĕ. Сăмах пултарăвĕнче те, тĕнче уçлăхне вĕçнĕ чухнехи пекех, суя эреш шыраса ларни мар, çынсен характерне тĕпчекен, сăнарлакан мелсене пуянлатни, тарăнлатни кирлĕ. Акă мĕн кĕтет пирĕнтен çыру сĕтелĕ.

*1962*

*Чăваш халăх поэчĕ*
*Яков УХСАЙ*